К 84.09 (=Чув)
Р 48
Ч-39243

# ВИКТОР РЗАЙ

## ÇЫРНИСЕН ПУХХИ

* * *

Микулана тепĕр виç-тăват эрнерен хулара чăнахах та çара илсе ячĕç. Микула кăна пит хавас — революци ĕçне сыхлама каять вĕт! Мархви те уншăн хавасланать. Вăл хăй те революци ĕçне пулăшас тесе иртнĕ эрнере çамрăксен союзне кĕнĕ.

## УÇĂ ХАПХА

### I

Пӳртре тар шăрши. Сывлама питĕ йывăр. Сывлăш çитмест. Малти шăннă чӳречесем умне уйăх хыпаланса пычĕ: пӳрт ăшне пăхать, сывракан çынсене çутатать. Унтан кăмака умĕнче çакăнса тăракан çăпала çине ӳкрĕ те çăпалапа ашкăнма тытăнчĕ.

— Çывăр ĕнтĕ... Никантăр... çывăр... Мĕн йăваланса выртатăн? Шурăмпуç та килет пуль ĕнтĕ, çутăлать пуль, çывăр.

Илтмест Никантăр арăмĕн сăмахне, арăмĕ çав сăмах хыççăн ун çумнерех шунине те туймарĕ. Хăрах аллине тăлăп ăшĕнчен кăларса тарланă кăвак пуçне тытрĕ те хăй сисмен çĕртенех:

— Эх-х! Самана!.. — йăвăррăн тăсса каларĕ.

Каларĕ те çавăнтах хăраса ӳкрĕ, хăй сасси улшăннинчен. Хаярланнинчен хăрарĕ. Хĕсĕк амбар айĕнчен тĕртĕнсе тухакан хăвăл каска пекех туйăнчĕ ăна хăйĕн сасси.

— Ара, Никантăр, тул çутăлать вĕт, çывăр.

Çук, каллех илтмерĕ. Арăмĕ тата çумнерех çыпçăнать, ăна ыталаса хăй патнерех хĕсет... Çук, туймасть Никантăр, илтмест арăмне.

...Вăл хапха умĕнче юр хырать. Сарлака, çĕнĕ кĕреçепе юра картла-картла тухать те чĕркуççи таранах хӳсе кайнă юра çул çине ывăтать.

Ыттисем те юр хыраççĕ. Кашни хапха умĕнчех. Хĕрарăмсем шыв ăсма каяççĕ, хăшĕ таврăнаççĕ.

— Кĕнеççул[1] тырă нумай пулать пуль, Никантăр Иванч, çур хĕлне те çитмен, картасем пытанчĕç юр айне.

— Атя, атя... Пур пултăрах...

Каллех хырать. Хĕрарăмсемпе пит калаçмасть вăл, юратмасть вĕсене.

— Ĕçĕнчен питрех калаçма юратаççĕ. Сурăх чĕлхи çинĕскерсем.

[1] Килес çул.

Вăл юр хырса пĕтернĕ çĕре ун патне чиркĕ старости пырать.

— Тур пулăштăр, Никантăр Иванч!

— Спассипă.

— Айта, кĕрер-ха... Ман санпа калаçмалли пур...

Сарайне кайса çуна çине лараççĕ. Вĕсенчен те аякра мар хăйĕн хĕрĕ, Клавье, чăхсене сĕлĕ парать. Алтан какалать, чăхсем йăпăртатаççĕ.

— Ну, Никантăр Иванч, пĕтетпĕр вĕт... Выçă юлатпăр... Леш, хайхи, Мирун ачи, аçа çаптăр, Кĕркури, Комитет петнотта ... тунă тет-и, амак... Пуянсен тыррине пуçтарса илсе...

Ку тĕлте чăтайман Никантăр, пĕркун халăх çинче Кĕркурипе вăрçнине аса илсе, чышкăсене çŭлелле çĕкленĕ чух сăмса умĕнчех тăракан старостăна ăнсăртран питрен килсе лектернĕ.

— Ара... Мана ан çап-ха эс... Пуянсен тыррине пуçтарса çуккисене памалла тунă, юлашкине хулана ямалла, хула выçă вилет...

Ăнланнă Никантăр. Каласа пĕтерме паман старостăна:

— Чарăн! Пĕлетĕп, — тесе пŭрте кĕрсе кайнă. Кĕреçине те алкум вĕçне хурса хăварма маннă, кĕреçепех кĕнĕ пŭрте.

— Ара-а, Никантăр... ма кĕреçŭне хăвармарăн, пŭрте сивĕтен вĕт, пŭртре мĕн тăван кĕреçепе, юрлă вĕт кĕреçŭ, — тĕлĕнсе ыйтрĕ арăмĕ, Урине...

Ăш-чик килсе тулнипе кĕреçене урай варне килсе çапнă, арăмне хĕненĕ, хĕрне — Клавьене — чăхсене сĕлĕ нумай паран тесе пŭртрен хăваласа кăларнă. Кунĕпех тулашнă ĕнер Никантăр, нимле ĕç те тăвайман. Каç пулсан çеç вара вите урайне сирсе тыра пытарнă. Арăмĕпе хĕрĕ шăтăк чавнă, вăл ырашне туртнă. Унта ик çĕр пăт пытарнă, çŭле, ытлăха, татах ик çĕр пăт. Пĕрне тупсан, тен, тепĕрне тупаймĕç те...

Иртнĕ кун çинчен шухăшлать Никантăр. Никантăр сисет: такам, темĕскерле вăй, хăй сисмен çĕртех, таçтан килсе темле хупăрласа илнĕ ăна, хĕснĕçем хĕссе пырать, пĕр кĕтесе хупăрлать, ниçтан та хăтăлма çук.

Кам-ши вăл? Мĕнле вăй-ши? Мĕншĕн ăна, ялти чи хисеплĕ çынна, çавăн пек хĕсеççĕ? Кама мĕн тунă вăл? Мĕншĕн Кĕркурин вăл ĕмĕр тăрăшпех çыврмасăр тунă пурнăçне ватса каймалла? Ĕçлемесĕр пурăннă-и вăл, Никантăр?!.

Ашшĕнчен çамрăклах юлнă. Вун сакăр çулта çеç юлнă ашшĕ вилнĕ чух.

— Асту, ачам, ĕçле, мĕн пуррине лайăх сыхла, ху куçна сыхланă пекех сыхла — ан салат, тата тума тăрăш, мĕн пурри çине татах хушăнтăр... Авлансан арăмна ан ĕнен,

тилхепене ан пушат, лайăх тыт арăмна, хăвăнтан ан ирттер. Çынна та ан ĕнен: кашни çын хăйшĕн тăрăшать — санне илесшĕн, хăйĕнне парасшăн мар. Эс те çавăн пек пул, асту, ывăлăм...

Çук, иртмен вăл ашшĕ сăмахĕнчен. Ашшĕн çак сăмахĕнчен. Ашшĕн çак сăмахне яланах асра тытнă: манман, ашшĕне хисепленĕ. Ашшĕ вилсен тепĕр çулнех авланнă: лайăх, типтерлĕ çын хĕрне, утар тытакан Матви Уринине илнĕ. Хуньăмпа лайăх: пĕрле ĕçсе çисе пурăннă, анасене тара пĕрле илнĕ, пĕрле акнă, пĕрле ĕçленĕ. Турă пулăшнипе, авлансан виç çултанах ашшĕ çуртне пăсса тепĕр çурт, пысăк çурт, лартнă, ик работник тытакан пулнă. Халь унăн та çук та, анчах вăл, Никантăр, работник тытма пултарайманнинчен мар, урăххинчен килет... Халь работникпе хăрушă пурăнма, кичем, халь самани çапла. Унăн ашшĕ те, çăмăл пултăр тăпри, çилленес çук, пурлăха салатать ман ывăл, путсĕр тес çук вăл.

Тепĕр май çаврăнса выртрĕ Никантăр, пуçне тăлăп ăшне чикрĕ. Çыврасшăн. Анчах çывăраймасть. Куçа хытă килсе чăмăртанă пулсан та курать куç, курать...

Ак ашшĕ шурă сухалне чĕтрете-чĕтрете, катăк шăлĕсене кăтартса, таçтан килсе тухнăскер, вĕсем патнелле пырать. Ак тăлăпа сирсе пăрахать: пăхать, ун çине пăхать, ывăлĕ çине...

— Эх-х! Х-хăравçă-ă!.. Мантăн-им аçуна-а!.. Рапотникусем ăçта-а? Сăмса айĕ типмен Кĕркурирен хăратăн х-хăравçă-ă!..

Куçа уçса ячĕ Никантăр. Сиксе тăчĕ. Никам та çук... Арăмĕ вăранчĕ:

— Мĕн пулнă çак сана, Никантăр? Вырт чипер... чĕркуççипе хырăмах килсе тĕкрĕн...

Никантăр чĕнмест. Никантăр турă кĕтессине пăхать. Ашшĕ иконсем хыçĕнче çухалнă пек туйăнчĕ ăна...

— Тĕлĕкре-и ку е чăнах-и?..

Çук, çук — тĕлĕкре мар. Чăнах. Ак халь çеç ятласа кайрĕ: шурă сухалĕсем чĕтреççĕ, çăварне карнă, шăлĕсем çук. Ăна ятларĕ, никама та мар, ăна... Ох, нумай пулать ашшĕне курманни, нумай — вăтăр пилĕк çул...

— Эх-х! Х-хăравçă!.. Сăмса айĕ типмен Кĕркурирен хăратăн, хăравçă!..

Чăнах-ши, çаплах каларĕ-ши вăл мана? Çаплах-ши?..

Çук, çук, вăл хăравçă мар. Вăл Кĕркурирен пĕртте хăрамасть. Мĕн вăл Кĕркури? Кĕркури вăл нимĕн те мар, Кĕркурие вăл çӳплĕ турпас выраннe те хумасть. Турпассем пирĕн ура айĕнче, Кĕркури тата аяларах — турпассем

айӗнче. Мӗнех вара вӑл, Кӗркури, чӑнах та? Ӑна вӗт пӗр ҫапсанах имӗрсе пӑрахма пулать... Ҫирӗм ҫулхи ача. Ватӑ ашшӗпе пурӑнать. Ашшӗ, чухӑнскер, кӑҫал кӗркунне ҫеҫ вунӑ пӑт тырӑ илнӗ-ха унтан кивҫен... Тӗлӗнмелле: ҫынсем кӗркунне тырӑсене пӳлмене тӑкаҫҫӗ, ун хӑй ҫӑварне тӑкма та ҫук... Хӗрхеннӗ те ӑна Никантӑр, ҫитес ҫулччен панӑ вара кивҫен. Вунӑ пӑт вырӑнне вун виҫӗ пӑт парать... Ну, вот мӗн вӑл Кӗркури?.. Сийччас ашшӗ патне каятӑп та: ҫапла, ҫапла... вунӑ пӑт илместӗп, тулькка ывӑлна, Кӗркурине, чар пӑртак, вӑл асма пуҫланӑ, ун пек юрамасть, ҫын ҫынсӑр пурӑнаймасть: эп те сире кирлӗ пулӑп, эсир те мана кирлӗ пулӑр...

Лӑпланчӗ Никантӑр. Куҫне хупса каллех тӑлӑппа пӗркенчӗ. Арӑмӗ, ни ҫывӑрса кайнӑ, ни ҫывӑрса кайманскер, ӑйӑх тӗлӗшпе ахлатса илчӗ. Шуҫ ҫӑпала ҫинчи уйӑх тула тухса шӑннӑ чӳречесен умӗнчен таҫта пӑрӑннӑ. Пӳртре паҫӑрхинчен тӗттӗмрех. Таҫти кӗтесре шӑшисем ашкӑнкалаҫҫӗ... Сентре ҫинчен Клавьепе ҫывӑрнӑ кушак ҫӗре сиксе анчӗ. Темӗскер ӳкерчӗ...

Анчах илтмест ӑна Никантӑр. Ун патне каллех ашшӗ пынӑ:

— Эх-х! Хӑравҫӑ!.. Ҫӑтӑк-ҫурӑксемпе ҫыхланатӑн, э-х-х!.. Вун виҫӗ пӑт тырӑ пӳлмене хӗсет-и мӗн, эх-х! Хытӑрах вӗтмелле пулнӑ иккен сана!

Чышкисене сулла-сулла иконсем хыҫне пытанчӗ, каллех ҫавӑнта ҫухалчӗ ашшӗ. Паҫӑрхинчен те хӑрушӑрах, паҫӑрхинчен те тискертерех: куҫӗсем ҫап-ҫаврака, йӑл-ял тӑваҫҫӗ, кӑвар пек.

Ҫук, ҫук, каймастӑп унта, Кӗркури ашшӗ патне каймастӑп. Ҫав ҫӑтӑк-ҫурӑк патне-и?.. Ним тусан та каймастӑп. Мӗншӗн ҫухатас вун виҫ пӑт тырра? Атте калашле, пӳлмене хӗсет-и-мӗн вӑл?.. А Кӗркурипе урӑхла калаҫма та пултарӑпӑр: ҫара ҫерҫи урине хуҫса яма ытлах йывӑр мар. Тыт та хуҫ... Ҫӳретӗр сиксе. Унта сикет, кунта сикет — ҫук, ниҫта та лараймасть... Ҫаплах вилет вара ӑҫта килчӗ пӗрене хушшине хӗсӗнсе.

Кушак кӑмака хыҫӗнчен шӑши тытса тухрӗ. Шурӑмпуҫ кӗнӗ урай варне пырса унталла-кунталла пӑхкаларӗ те сӗтел айне кӗрсе шӑши шӑммисене шутлама тытӑнчӗ. Мӑрлатса ҫиет. Урӑх ним сас та ҫук. Шӑп. Кушак вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе ҫеҫ мӑрлатать.

«Хӑҫан, хӑҫан каян вара эс?.. Мӗн тума каймалла вара сан... хӗрлисем патне? Мӗн пур унта?.. Ан кай, ан кай, Кӗркури, Кӗркури, ан кай!» Кушак мӑрлатма чарӑнчӗ. Шӑшине пӑрахса сӗтел айӗнчи сентре ҫинелле пӑхать.

Унта Клавье. Унтан вăл нумай пулмасть аннă. Клавьепе юнашар выртнă. Клавье кăкрисем ăшă. Ах, лайăх унпа çывăрма... «Мĕн пулнă вара ăна халь, кампа калаçать вăл?» — тенĕ пекех пăхса тăрать кушак...

Клавье тĕлĕкре. Клавье аташать. Вăл аташнине ыттисем илтмеççĕ. Ыттисем çывăраççĕ.

## II

Сахал пурăнман тĕнчере Кирле пичче. Утмăл çинелле ярăнса пырать ĕнтĕ. Такама та курнă, такама та пĕлнĕ, таçта та çитсе çапăннă, анчах хăй ывăлĕ Кĕркури пек путсĕр ача курман:

— Вот ес на, хы! Ăçтан çумăр çунине те пĕлмест. Вот ухмах! Ăна выçă ан вилтĕр тесе ырă çынсем ыраш параççĕ, вăл, анкă-минкĕ, вĕсене хирĕç паккать, вот ристан!.. — тесе, кăмака умĕнче айăккăн выртакан хура чейнике илсе хуран айне çакрĕ. — Вот тĕнче! Хы! Ара, мĕн курас ĕнтĕ унпа? Пĕчĕкрех мар, иçмасса, пăртак: тытса хурăн хуллипе ăшаласан ăсланĕччĕ те-и тен? Никантăр Иванч... Никантăр Иванча кам хирĕç пытăр, мĕнле ухмах унпа хирĕç калаçтăр!

Хуран айĕпе пĕрлех саралса кайнă чĕлĕмне те мăкăрлантарса ячĕ Кирле пичче. Пĕртен-пĕр чӳречерен кĕрекен ирхи хĕвел юрлă çырма урлă каçса хăйĕн пĕр пайăркине Кирле пиччен пуç тӳпиййĕ çине пăрахнă. Шурă, кĕмĕл тĕслĕ çӳçе сават. Хĕвел пĕрре пуç тӳпинче пулать, тепре ĕнсе çине анать.

— Вот ристан! Хы! Кашкăр пек, килте çывăрмасть тата, ял касса çӳрет.

Калаçас килет Кирле пиччен, ывăлне ятлас килет, ăса кӳртес килет. Çук, килмест ывăлĕ. Ĕнер ирпе тухса кайнă та паян та çук. Таçта çывăрнă — кам пĕлет?

Пĕрĕннĕ куçсем хуран айне пăхаççĕ. Хуран айĕ ялкăшать, типĕ турпассем лайăх çунаççĕ. Шыв вĕреме тытăнчĕ, чейник хуппине çĕклет, чейник тутинчен те юха пуçларĕ шыв...

— Ара, ма килмест? Апатне те çын патĕнче çиет-ши вара ку ухмах?

Чейнике хуран айĕнчен илсе ансăр сĕтел çине лартрĕ, пĕр хăмаллă шкап çинчен кăçал çулла красногвардейцăсем пăрахса хăварнă консерва банкине илсе сĕтел хушшине ларчĕ. Унтан пĕр чĕлĕ çăкăр касса тăварпа шуратрĕ те ĕçме тытăнчĕ.

— Тĕлĕнмелле: ма хăрать-ха вăл Никантăр Иванч ман Кĕркурирен? Çав тери хисеплĕ çын, ĕмĕрне те хапха умне те

пырса тăманскер, паян ман патăма, Кирле патне, килнĕ — ман патăма, никам хисеплемен çын патне... Ара, у çеç те мар-çке-ха, иçмасса. Вунă пăт тырра илместĕп, чар ывăлна тесе те каларĕ. Тĕлĕнмелле.

Крушкăна лартса çурăмне хыçать Кирле пичче: малтан алăпа, кайран кăмака кĕтеснех кайса хышакланать...

— Вунă пăт тырă... вуннă мар-ха, вун виçĕ пăт... ахалех çырлахать. Ачана çеç, ывăлăма çеç чармалла — парăм хуйхи те пĕтет... Мĕн чармалли пур ăна, Кĕркурине? Чистиех ухмах мар пулĕ-çке, хăй те пĕлет пулĕ вун виçĕ пăт тырă мĕн чул тăнине... Ак килсенех каласа парать те ăна вăл, Никантăр Иванч килнине каласа парать те... ухмах-и мĕн вăл...

Кунта пĕрле хăйĕн вата пуçĕпе Кирле пичче çуллахи красногвардейцăсене аса илчĕ. Вĕсем ку ялта мĕншĕн чараннине путлĕнех пĕлмест вăл.

Анчах, çапах красногвардейцăсем «сан ывăлу молодец» тенине лайăх астăвать, манман халĕ те. Мĕншĕн молодец? А мĕне кирлĕ ăна вăл? Молотецă тăк молотецă пултăр — вăл лайăх. Молотецă пулсан Никантăр Иванчпа та пурăнма пĕлĕ-ха. Вун виçĕ пăт тырă мĕн хак тăнине те пĕлĕ...

— Ах! Хы! Ма килмерĕ-ха тата?

Сĕтел хушшинчен тухса кĕтеселле виçĕ хутчен хĕрес хыврĕ те Кирле пичче ывăлне кĕтме пăрахса кăмака чĕртсе яма тытăнчĕ.

Кăмака çирĕм çул ĕнтĕ вăл хăй хутать. Арăмĕ, Кĕтерне, Кĕркурине çуратсанах, çуратнă çĕрлех, вилнĕ, ачине вара, Кĕркурине, кӳршĕ арăмĕ хăй ачипе пĕрле кăкăр çитерсе ӳстернĕ. Мĕн тăвас тен? Вилнĕ те кайнă. Лайăх çын вилет çав вăл — ухмаххи пурăнать...

— Ара-а! Кирле пиччен Кĕтерне пур чух пурнăçĕ никаманнинчен те катăках пулман: сăмаварĕ те, ĕни те пулнă...

Кăна ĕненет Кирле пичче, арăмпа вăл хăй те пит килĕштернĕ, пасар кунсенче ĕçсе килсен кĕлете хупкаласа ларткаланă пулсан та, пит çилленсех кайман.

Анчах кӳршĕсем: «Кирле пичче хăй ухмах, хăй путсĕр, мĕн пур пеккине ĕçсе пĕтерет», — тенипе ниепле те килĕшмен. Уншăн вăл вĕсем çине пайтах çилленнĕ.

— Пурăнса курччăр-ха, çитчĕр ман çула, вара мĕн пулĕ, — тенĕ вăл яланах ĕçни çинчен сăмах хушсан. — Ак халь парăм татăлнине хисеплесе ĕçейресчĕ пĕрре... Ма килмерĕ-ха вăл, хă?!.

Кăмака çунать. Кăмакаран вĕри çапать. Кĕркури çулла хатĕрленĕ вутă типĕ, лайăх çунать. Хуçăла-хуçăла анаççĕ кăварсем, саланаççĕ... Чĕлĕмне ĕмме пăрахсах темшĕн Кир-

ле пичче ак халь хуҫӑлса анса саланнӑ кӑвар ҫине пӑхать, тӗлӗрсе пӑхса тӑрать: саланса кайнӑ кӑвар кӗл пулса кайичченех пӑхса тӑчӗ, шурӑ кӗл пуличченех...

Вӑл ыттисем пекех ҫамрӑк, вӑйлӑ. Сакӑр пӑтлӑ михсене вӑркӑнтарнӑ анчах. Утӑ ҫулас тесен ун пек ҫамрӑксем пулман та, вӑл яланах ваттисен ӗретӗнче ҫулнӑ. Уншӑн ӑна юратнӑ, савнӑ. Хӗл кунӗсенче сиксе тухакан вӑя ниҫта кайса хума аптранипе, ашшӗн пӗр ятлӑ пурнӑҫӗ ӑнсах пыман пирки вӑл тутар ялне кайса работнике кӗнӗ. Ҫичӗ-сакӑр лаша пӑхса усранӑ. Ҫӗр ҫывӑрмасӑр ӗҫленӗ. Пӗрре ҫавӑн пек вӗсем аякри пасара кайнӑ, лашасем сутма кайнӑ. Ак вӗсем лаша урамӗнче тӑраҫҫӗ, унта-кунта — лашасем, ҫынсем, улшуҫсем. Ак вӗсем патне лаша илес текенсем пыраҫҫӗ, хуҫа вӗсене курса лашисене чӑпӑрккапа ҫапа-ҫапа тухать: лашасем ташласа кӑна тӑраҫҫӗ.

— Ну, Кирле, авӑтланӑп кӳрсет елӗ!..[1]

Вӑл утланса пасар урамӗпе ҫавӑрӑнса килет. Вырӑна ҫитсен топ! тӑрататъ лашине, тепӗр лаши, хуҫа чӑпӑрккапа хӑмсарнипе хӑраса ӳкнӗскер ... шарт! килсе тапать те, вӑл, Кирле, ним пӗлмесӗр ыткӑнса ывтӑнса каять... Ик аяк пӗрчи хуҫӑлнӑ, ҫӳллӗ кӑкӑр хыҫалалла хӗсӗннӗ... Вӑй ӗлӗкхи мар: виҫ пӑт ҫӗклесен те аяка темӗскер килсе чикет, ӗҫлеме йывӑр...

— Ну, Кирле, син авӑр кӗшӗ... Ме сине йӗкӗрмӗ тенкке акчча та... ӳке кит, син мине кирекми хасӑр...[2]

Ҫапла вара вӑл киле килет: аманнӑ. Ашшӗ вилет, тепӗр ҫултан — амӑшӗ. Асаплана-асаплана кил-ҫурта пуҫтарать те авланса ярать. Ӗлӗк, вӑйлӑ чухнех юратнӑ хӗрнех илет, Кӗтернене... Кӗтерне ӗлӗкхи пекех вӑйлӑ, чипер... вӑл ун пек мар, вӑл вӑйсӑр. Кӗтернене хӑйпе пурӑнма йывӑр килнине сисет вӑл, хӗрхенет Кӗтернене — ӗҫме пуҫлать... Вара? Вара Кӗтерне вилет, ӗҫ ӑшӗнчех путса вилет, ывӑлне ҫуратнӑ ҫӗр те кӑвас ҫӑрнӑран вилет. Ун ҫинчен ӑна тухтӑр каланӑ, пӗлекен ҫын...

Ҫапла вара юратнӑ, вӑйлӑ Кӗтерне кӗл пулса каять, ак ҫак хуҫӑлса анакан кӑвар пекех хуҫӑлса анать, сӳнет... Ак ҫак хуҫӑлса анакан кӑвар пекех хуҫӑлать, сӳнет вӑл та, Кирле те... Мӗншӗн ҫавӑн пек-ши? Мӗншӗн этем ҫак кӑвар пекех хуҫӑлса анса кӗл пулать-ши, мӗншӗн-ши?

Ҫук, ӑна пӗлмест вӑл, ӑна никам та пӗлмест. Ӑна турӑ анчах пӗлет, турӑсӑр пуҫне ӑна никам та пӗлмест. Ҫук,

---

[1] Ну, Кирле, утланса кӑтарт-ха!..
[2] Ну, Кирле, эс сыв мар ҫын. Ме сана ҫирӗм тенкӗ укҫа та ... киле кай. Халь эс мана кирлӗ мар.

çук! Пĕлмест ăна никам та! Çылăх, çылăх ун çинчен шухăшлама.

— Христос тӳснĕ, хăйне пăталанине те тӳснĕ, пирĕн те тӳсес пулать, тăвансем...

Варсонофи атте проппăвĕт каланă чухне яланах калать, çавăнпа манман ун сăмахне Кирле те.

Тарăнтарах шухăша кĕрсе кайсан çав сăмахсене аса илет те чарнать вара е хăйне хăй ӳпкелесе хăйĕн çине хĕрес хывать...

— Вилмелле пулать, ун çинчен шухăшлас мар... Айта, каçарах ĕнтĕ, турă, каçарах... Христос чăтнă, эпир те чăтар...

Тулти хапха чĕриклетсе илчĕ, ăна кура Кирле пичче те ура çине тăрса чӳрече умне пычĕ.

— Ак Кĕркури те çитрĕ, калаçăпăр ĕнтĕ халь...

Пĕчĕк алăк уçăлчĕ. Пӳрте çирĕп çамрăк кĕрет. Мăлахайне, кĕрĕк пиншакне хывса кăмака умне пырать. Аллисене ăшăтать.

— Хи! Кĕркури... Мĕн, унта Никантăр Иванча хирĕç темĕскер тăвать темест-и?! — Капла пуçлас мар тенĕ çĕртенех çапла пуçарса ячĕ Кирле пичче. — Эс мĕн, шуткă тесе пĕлетне-мĕн унпа çыхăнма, анкă-минкĕ...

Хытă вăрçса пăрахас тенĕччĕ Кирле пичче, хытă ятлас тенĕччĕ, анчах ... мĕн пулнă вара ун, Кĕркурин куçĕсене? Мĕншĕн шăтарас пек пăхаççĕ вара вĕсем ашшĕ çине?..

Ывăлĕ Кĕркури çине лайăх, тĕплĕн нихçан та пăхман Кирле пичче. Паян, малтанхи хут, пысăк ĕç çинчен калаçмалла пулнă пирки ирĕксĕрех куçа-куçăн тăмалла пулнă. Ун умĕнче шăлтах пысăк çын тăрать, пысăк, тĕреклĕ çын. Куçĕсем те ача-пăча куçĕсем мар: унталла-кунталла выляmаççĕ, пĕр вырăнта, вăйлăн пăхса тăраççĕ: пысăк, хура куçсем, çитĕннĕ куçсем. Кирле пичче хыттăн «анкă-минкĕ!» тесе каласа пăрахнă хыççăн вĕсем тата пысăкланчĕç, тата кăварланчĕç...

Çакна кура Кирле пичче хытă пуçланă çĕртенех çемçелсе кайрĕ. Тулнă ăш-чик, ырашĕ тăрук юхса тухнă михĕ пек, пушанса лăштăрт! анса ларчĕ.

— Эс... ан çиллен те-ха... Кĕркури...

Çапла пуçласа ячĕ вара Кирле пичче. Ан çиллен тесе ывăлне малтанхи хут каларĕ.

— Айта, кала, атте, кала — çилленместĕп, ху ан çиллен, — ывăлĕ кăмака умне пĕчĕк пукан лартса итлеме хатĕрленчĕ. Ашшĕ темле хăйĕнчен хăй çӳçенсе калама тытăнчĕ.

* * *

Паян ир Кирле пичче каç çуса кайнă çӳхе юр çинче çăпаталлă йӗр туса икӗ сурăха валли ыраш кӗлти антарса пама карта умне кайнă. Тăват кӗлте антарса тин çеç салатса пама тăнăччӗ, пăхать Кирле пичче — ун патне таçтан Никантăр Иванч пырса та тăнă.

— Сурăхсем пит нумай-çке сан?!.

Кирле пичче ку сăмах мӗне пӗлтернине сиснӗ, конешнă... анчах, мӗн тăвас тен? Çук пурнăçпа ним тума та çук. Мӗн каланине пурне те чăтса тухас пулать. Никантăр Иванч каланă, хисеплӗ, пӗлекен çын... Ну, вара Кирле пичче шапкине хул айне хӗстерет те ун патне, Никантăр Иванч патне, пырса пуç таять.

— Мӗн тăвас тен, Никантăр Иванч, ӗрчемеççӗ сурăхсем...

Никантăр Иванч кулать, шăлӗсене кăтартать. Кулмаллиех те çук та ӗнтӗ, пурнăç начаррине Кирле хăй те пӗлет те ӗнтӗ, мӗн тăвас тен?! Ăçтан Никантăр Иванча хирӗç калăн?

— Ӗрчетме пӗлсен ӗрчеççӗ вӗсем, сурăхсем... ӗрчетме пӗлес пулать, ял тăрăх кастарса çӳретме парас пулмасть ывăлсене, ӗçлеттерес пулать, кама хисеплемеллине те вӗрентес пулать... Сан ывăлу вӗт вăл. Ăна сансăр пуçне кам вӗренттӗр, кам каласа патăр ăна эпир мӗн ӗлӗкренех хисеплӗ çынсен шутӗнче тăнине?!.

Каллех тытăнчӗ, Никантăр Иванч... Каллех Кӗркури ăна хирӗç темӗскер тума пăрахсан кивçен илнӗ ыраша, килес çул вун виçӗ пăт памаллине, каçарасси çине çитрӗ.

— Çапла, ывăлăм, çапла, чипертерех ӗçлес пулать, тен, чăнах та, вӗсемпе пӗрлерех ӗçлесен сурăхсем те ӗрчӗç... Эп, всетки, аçу, манне те итлес пулать пăртак...

Аран-аран каласа пӗтерчӗ Кирле пичче. Ывăлӗ вăл каланă чух хăш-пӗр чух хӗрелсе, тепӗр чух такама хӗрхенсе кулни ātашtara-ataшtara пычӗ ăна. Темӗн чул ятламаллах, ывăла каланă пек калас тенӗ пулсан та, калаçса пӗтернӗ çӗре çемçе сас тата çемçелсе кайрӗ ун, Кирле пиччен. Сăмахсем çирӗппӗн тухмарӗç. Сăмахсем ывăлӗн чӗрине витмерӗç. Ăна часах сисрӗ вăл, ăна сиссех пӗр хӗвеллӗ куна аса илчӗ.

Ӗлӗкех, пӗр вун-вун иккӗре чухне, çуркуннехи кунсем чечексемпе сывланă чухне... ачасемпе çырма хӗрӗнче выляса çӳренӗ чухне пӗчӗк Кирле, çӗçӗпе ашкăнкалама юратаканскер, хăва хулли касса ахальрен çеç вăл хулла нӳрлӗрех çӗре чиксе хăварнăччӗ. Тепӗр çулне çав çинçе хăва хулли хăй хăва пулса кайнă, туратланса пӗтнӗ. Эп чиксе хăварнă çинçе хулах-ши вара ку тесе пӗлеймесӗр нумай-

ччен анраса пăхса тăчĕ пĕчĕк Кирле. Хулă ҫавах пулнă, пĕчĕк Кирле лартниех, нӳрлĕ ҫĕртен хăва хулли пĕр ҫул хушшинчех хăй хăва пулса ларнă, пĕчĕк Кирле асăрхайман та...

«Чăн та, чăн та ҫав хăва пекех, ҫавăн пекех Кĕркури те...» — тесе хăй тĕллĕн шухăшлать Кирле пичче, ывăлĕ ҫине тĕлĕнсе пăхса тăрать, хăйĕнчен вăтанать. Анчах мĕншĕн вăтаннине пĕлмест, ҫук, пĕлмест.

— Эх, атте! Хăҫан пăрахăн-ши эс мăшкăл айĕнче варăнма, хăҫан-ши?

— Хы! Ма мăшкăл?! Мăшкăл пулать-и вăл? — хытса, ҫирĕппĕн каласшăн пулчĕ Кирле пичче, анчах калаймарĕ: пĕрĕннĕ, вată куҫĕсем ывăлĕ пăхса тăнине чăтаймарĕҫ, пытанчĕҫ. Вĕсене ывăлĕ куҫĕнчен малалла тухнă, саралнă ҫамка сыхлать.

— Эс, мĕн, сан ывăлу ху пекех пуянсене сутăнать тесе шухăшлатăн-и-мĕн? Ҫĕлĕкне хул айне хĕстерсе вĕсем патне тайăлса пырасса кĕтетне-мĕн? Эх, атте, атте...

Кирле пичче пуҫне чиксе ларни кăшт хускатрĕ, чĕрене килсе чикрĕ. Ҫавна кура ывăлĕ, Кĕркури, хытă калама пуҫланă ҫĕртен ҫемҫерех калама тытăнчĕ. Темĕскер ăнлантарать ашшĕне, темĕскер калать? Пит ăнлансах каймасть Кирле пичче. Темĕскерле хула ҫинчен, спичкă, сахăр, ҫитсă тăвакансем ҫинчен каласа кайрĕ. Вăрҫă ҫинчен. Хула — выҫă, вăрҫăра ҫăкăр ҫук. Ялти пуянсем тыррисене пытарса усраҫҫĕ: ирĕккĕн памаҫҫĕ, вĕсене тытса илес пулать. Пулас саманашăн, телейлĕ саманашăн ним те хĕрхенмелли ҫук. Пуянсен тыррисене тытса илес пулать: спичкă, сахăр, ҫитсă тăвакансем патне ярас пулать, ялти чухăн, ҫăкăрсăр выҫса пурнакан ҫынсене парас пулать...

Тĕлĕнмелле: спичкă тăвакансемшĕн суха тăвакан айăплăши? Килччĕр те кунта суха хыҫҫăн утчăр, спичкă тăвакансем утă ҫулччăр, лаша вити хырччăр. Ак Кирле пичченех икĕ ят ҫĕр пур — тыт та сухала, выр, ҫап, сăвăр, ҫăкăрне пĕҫер... Вăрҫă?! Ара, ан вăрҫ! Кам хушнă вĕсене вăрҫма? Ҫук, ҫук, Кĕркури йăнăшать. Мĕнле-ха апла: Никантăр Иванчăн тыррине илес те чухăнсене салатса парас? Маншăн вăл айăплă-и-мĕн? Маншăн вăл мар, маншăн Елччелти улшуҫ Пикмулла айăплă, вăл мана кăкăрсăр хăварчĕ, айăк пĕрчисĕр, Никантăр Иванч мар... Ҫук, темĕскерле пулса кайнă ку Кĕркури, темĕскерле...

Ывăлĕ те сисет ашшĕ ăнланайманнине:

— Ну, юрĕ, атте, тек калаҫмăпăр, — тет те алăк патĕнчи кутник сакки ҫине кайса выртать. — Анчах эсĕ унта Никантăр Иванчăсемпе ман ҫинчен калаҫса ан ҫӳре...

— Хы! Ҫаплах вĕсемпе хирĕҫсе ҫӳрес тетне ĕнтĕ?!

Ывăлĕ чĕнмерĕ, аллине çеç сĕлтрĕ. Кирле пичче вунă пăт мар-ха, вун виçĕ пăт... тесе шухăшлакаласа мăрьене хупрĕ.

Унтан çĕр çывăрмасăр темĕскер туса çӳренĕ ывăлĕ çине пăхса, — вăл пуçне стена çумнелле туса çывăрса кайнă, — нумайччен пăхса тăрать те тăрук хăраса ӳкет.

— Асту, асту, Кирле! Ывăлна чармасан... эс те ывăлупа пĕрлех шăтăка çавăрăнса ӳкĕн, асту!

Мĕнле аса илеймен вара вăл ăна паçăртарах! Çаплах, çаплах કаларĕ вĕт Никантăр Иванч!

Кирле пичче сак çине тĕшĕрĕлсе анать, такамран хăрать, кукленнĕ пек пулать... Çамки çине сивĕ тар пăчăртанса тухать...

... Çакăн пек хĕлле. Сивĕ кун. Йывăçсем шартлатаççĕ. Яла салтаксем килнĕ. Пасар вырăнче халăх. Шăп тăрать. Пĕри те пĕр сăмах чĕнмеççĕ. Никантăр Иванчпа салтаксем çеç халăх варринче шартлаттарса çӳреççĕ. Ик салтак аллинче накайккă, чĕн накайккăсем. Никантăр Иванч халăх хушшинчен çынсене тыта-тыта парать: «Ак çакă тата ак çакă! Студентсемпе пăлханнă!»

Накайккăллă çынсем вĕсене шăла çыртса вĕтеççĕ. Лешсем юр çине йăванса каяççĕ. Юн. Шурă юр хĕп-хĕрлĕ пулса каять. Йынăшаççĕ. Халăх чĕнмест. Шăп. Нумайăш йĕреççĕ. Никантăр Иванч юнлă çынсем çине пăхса хаяррăн кулса тăрать...

Хăçан пулнă ку? Хăçан? Хăçан-ши?.. Нумаях та мар вĕт?.. 1905 çулта мар-и-ха?! Çапла, çапла, çавăн чухне. Сивĕ. Юн. Шурă юр хĕп-хĕрлĕ... А халь те çавăн пек пулсан? Ыранах, каллех, Никантăр Иванч урине малалла туса хаяррăн кулса тăрсан?!

Çамки çинчи сивĕ тара кăтрашка аллипе шăлса илчĕ Кирле пичче. 1905 çулта пулнă ĕç, каллех тепĕр хут туса пынăн туйăнать ăна. Такам мăя, ахаль те çинçе мăя, йĕпетнĕ кантрапа пăвнă пек. Накайккă. Юр. Юн...

Кам, кам çĕнтертĕр вĕсене, Никантăр Иванчсене? Кам?! Çук, никам та çĕнтерес çук. Халех, çак кунсенчех салтаксем илсе килет те вăл...

Каллех çамки çинчен тарне шăлса илчĕ Кирле пичче. Чĕтрекен аллисемпе чĕлĕм турта пуçларĕ.

Тĕрĕс, тĕрĕс, кун пек йĕрке пулас çук. Турă курать пульçке саманана, курать пуль... Варсонофи атте калашле, турă халь çавăн пек самана туса этемлĕхе сăнать, кам ăçта каять: кам шуйттан çулĕпе, кам Христос çулĕпе... Сăнать те, вара ĕлĕкхи йĕркех лартать... Вара накайккă, юр, юн... Никантăр Иванч пĕр урине малалла туса вĕсенчен, шуйттан çулĕпе кайнăскерсенчен, хаяррăн, шăла кăтартса кулса тăрать... Ман ывăл та унтах, эп те унтах...

Вĕçсе çӳресе, çулне-йĕрне пĕлмесĕр, шăна эрешмен картине пырса лекет. Тухаймасть унтан. Тапалана-тапалана урисене тăсса ярать вара. Вилет шăна... Пĕлет ăна Кирле пичче, шăна эрешмен картине пырса çапăннине ĕмĕр тăршшĕнче темĕн чул та курнă. Яланах шăнине айăпланă вăл. Шăна хăй айăплă. Шăни хăй вĕçме, çулне-йĕрне пĕлмесĕр çӳрет, хăй пырса лекет эрешмен картине. Ăна, шăнине, хĕрхенмелли çук!.. Этем те çавах: пурăнма пĕлмесĕр асапланать, пурăнма пĕлмесĕр патак çиет; накайккă та лекет. Кам хушнă ăна, Кĕркурине, Никантăр Иванчпа хирĕçсе пурăнма? Кам хушнă? Вăлах айăплă пуль çав уншăн, ашшех, Кирле піччех. Никамăн та мар, унăн ывăлĕ! Камăн пăхмалла Кĕркури хыççăн? Ашшĕпе амăшĕн пăхмалла. Ăна Варсонофи атте те çапла калать. Тĕрĕс вăл. Кĕркури хыççăн та ашшĕн, Кирлен, пăхмалла...

Куççуль килсе тухрĕ Кирле пиччен. Ватă, пĕрĕннĕ пит çăмартисем тăрăх юхса анса шуралнă чĕтрекен сухалсем çинче чарăнса тăчĕç вĕсем... икĕ пĕрчĕ вĕри куççулĕ.

Ывăлĕ çыврать. Курмасть ашшĕн куççулĕсене. Тен, вĕсене курсан Никантăр Иванчпа хирĕçме те пăрахĕ-и тен?

Начар çав вăл Кирле пичче. Ку таранччен ывăлне те чарайман, начар... Мĕн тăвас ĕнтĕ халь? Варсонофи атте патне кайса канашламалла мар-ши? Вăл пулăшĕ вĕт? Пулăшаканччĕ...

Хăвăрт тăрать: сиплетнĕ кĕрĕк, çĕлĕк тăхăнать те Кирле пичче алăк хыçĕнче çухалать. Сĕтел çине манса хăварнă чĕлĕм, тата силленсе юлнă икĕ пĕрчĕ вĕри куççулĕ çăкăр тĕпренчĕкĕсем ăшне сăрхăнаççĕ. Пӳртре пĕр мехеллĕхе шăп пулать. Унтан, хĕлле те вилме юратман шăрчăк, таçта, те кăмака айĕнче, те сак айĕнче юрласа ярать. Ун хыççăнах Кĕркури тепĕр май çаврăнса выртса:

— Клавье, Клавье!.. Хуть те кирек мĕн каласан та сан аçу путсĕр, калама çук путсĕр çын, — тесе хыттăнах çухăрса ячĕ. Тепĕртак тăрсан çемçен:

— Эс ан çиллен, Клавье, уншăн, ан çиллен... Клавье...

Кирле ывăлĕ аташма чарăнать. Шăрчăк тата хытăрах юрласа ларать...

## III

Ял çине такам, курăнман алăпа, шурă-çутă тутăр килсе витрĕ. Çуртсем хура-çутă йăмрасем хыçне пытанчĕç: шăннă чӳречесем витĕр, вăрттăн, пĕрер çутă куçпа урамалла йăпшăнса пăхаççĕ. Çӳлте уçăлса хупăнакан çăлтăрсем. Хушшинче вĕсен кĕтӳçĕ — уйăх, сарă сухалласкер çăлтăрсене

шутласа çӳрет. Мăн кăмăллăн, ерипен шуса вăхăчĕ-вăхăчĕпе таçта кайса çухалать те каллех ярăнса тухать.

Илемлĕ çĕр. Калама çук илемлĕ. Çĕнĕ юр, шăп, çилсĕр çанталăк, карта хĕрĕнчи улăм кĕл хура тĕмĕсем, суллан-масăр, йывăр шухăша кайнă пек, чĕнмесĕр ларакан пах-часем, çĕр çумнех лапчăннă çырмари улăхлă мунчасем, çырма вĕçĕнчи хăй тĕллĕн шăнкăртаттарса юхакан шыв, сайра хутран тĕттĕме çурса каякан купăс сасси — пурте, пурте илемлĕ, çав вăхăтрах шухăша яраççĕ, чĕреллĕ этеме хăйсем çине пăхтараççĕ, хăйсем çинчен шухăшлаттараççĕ, чĕре варрине темĕскерле ăшшăн çунакан япала хурса чĕрене хастаррăн таптараççĕ... Эх, лайăх-çке çакăн пек чух пĕр-пĕр вăрттăн хапха умĕнче е çын иртсе çӳремен кĕлет умĕнче юратнă савнипе калаçса тăма, ун хĕрелсе шуралакан пичĕ çине пăхма! Хура, вăрăм куç хашакисем çине айăккăн вĕçсе кĕрекен çемçе çутă юр пĕрчисем ӳкеççĕ. Вăл куçне хупать. Илемлĕ, юратнă куç хашаки (куç харши) çинчи юр ирĕ-лет. Вăл каллех вăтаннă пек пулса сан çине пăхать... Эсĕ ăна калатăн, калатăн, тем çинчен те калатăн... Вăл итлет, итлет... Çамрăк кăкри çӳлелле çĕкленет. Шурă çитсă тутăрлă пуçĕ ерипен сан кăкру çине йăванать... Çав вăхăтрах уйăхĕ ăшăнса пĕлĕт айĕнчен ярăнса тухать, таçта итем хыçĕнче çăлтăрĕ çиçĕнет, унтах, аякра та мар, çырмари çăл тем çинчен: те хăй тăлăххи çинчен, те хăй умне усăнса аннă йăмра çинчен — уçă саспа кĕвĕлет, уçă саспа, хурлăхлăрах юрă... Чăтаймастăн вара эс те, кăкру çинчи савни пуçне ху патнарах чăмăртатăн, саватăн... Эх, лайăх-çке, илемлĕ, ăшă...

Анчах ку кунта çеç, ялта çеç... Ялта çеç пĕччен кĕлет-сем, хапха умĕсем. Кунта, ялта, юр шурă, тен, таçти аяк-ри юрсем шурă мар? Тен, вĕсем этемлĕх юнĕпе хутшăнса пĕтнĕ? Тен, вăл вырăнсенче кунти çутă çăл вырăнне шăнкăртатса пĕччен юхакан таса, çутă шыв вырăнне, çăл таканисем тăрăх çакăн пек шăнкăртатса этемлĕх юнĕ юхать? Тен, çакăнти пĕччен çăл та хăйĕн хурлăхлă юррипе çав-сем çинчен калать?.. Тен, унта уйăх та кунти пек мар, ăшă, кăмăллă мар?! Тен, унта çăлтăрсем те çук?! Кунта ак кар-та айĕсенче улăм кĕл тĕмисем хуралса выртаççĕ, тен, унта çакăн пекех юра хуратса, киле вată ашшĕпе амăшĕсене, çамрăк арăмĕпе алăри ывăлĕсене пăрахса хăварнă çынсем выртаççĕ?! Шурă юр çинче юнĕ хытса кайнă, хăйĕнчен кăшт аяккарах винтовки выртать... Ох, тискер, тискер! Илемлĕ каç хăрушланса каять, çырмари хура мунчасем тăшманăн курăнаççĕ... Эсĕ вара ирĕксĕрех кăкру çинче ăшшăн выртакан савни пуçне хыттăн сирсе яратăн. Савни

тĕлĕнет, кăшт хĕрелсе кайнă пек пулать... Анчах ун çине пăхмастăн, ун илемлĕ, хура куç хашакисене юратан пулсан та... çав тăлăххăн выртакан, хуçинчен тăлăха юлнă винтовка сана чĕннĕнех, çухăрса чĕннĕнех туйăнать... Пурнăçшăн çапăçаççĕ халь, пурнăçшăн. Е пурнăç, е вилĕм!..

— Каятăп, пурпĕрех каятăп! Кунти ĕçсене пĕтеретĕп те — вăрçа, Колчака хирĕç!..

Шухăш айĕнчен тухса пуçне çӳлелле çĕклерĕ, ура айĕнчи юр хыттăн кăчăртатма тытăнчĕ. Кам вăл?

Вăл — Кĕркури. Кирле пичче ывăлĕ. Малти каса улаха каять... Çул хытă, çутă çул аякра. Çул çырма урлах каять. Çул çырма урлă каçса тепĕр çырмари мунчана илсе пырать...

Улах. Икĕ хĕр лавка умĕнчи сак çинче, виççĕшĕ лавкана хирĕç, пĕчĕк чӳрече умне ик пукан çине хăма хурса ларнă. Каччăсенчен пĕри алăк янаххи çинче, иккĕшĕ лавкапа хăмаран тунă сак хушшинче пĕр пукан çинче лараççĕ. Хĕрсем пурте кĕнчеле арлаççĕ, кĕнчелисем тӳпене тĕртĕннĕ. Каччăсем, пукан çинчисем, чĕлĕм туртаççĕ, алăк янаххи çинчи çыврас килнĕрен çăварне карса ларать...

Теменшĕн чĕнмесĕр лараççĕ. Шăп. Йĕкесем çеç пĕтĕрнеççĕ, вăхăчĕ-вăхăчĕпе урайне тăрăнса кăр-р-р! çавăрăнса ухса каяççĕ. Тата хура пăралăк çинче çакăнса тăракан трупасăр лампă те краççын начартан, те урăххишĕн хăйне хăй лăпăртатса ларать... Урăх нимĕн те çук, нимле сас та...

Ирĕксĕрех хĕрсем те, каччăсем те иртнĕ çулхи улахсен вăййисене аса илеççĕ. Ташă, кулă, купăс: урай чĕтренет, чӳречесем чĕтренеççĕ, пӳрт тӳпинчен тăпра юхать — çук, пурпĕрех чарăнмаççĕ ташлама, кулма, ахăлтатма... Кăмака çинчен Хветле инке анать: «Ара, ачасем, ишлет вĕт çурт, ишлет, иртсе каякан мĕн калать?!»

Çук, ăна та итлемеççĕ: ташлаççĕ, сикеççĕ.

Халь ун пек мар. Халь темшĕн шăпланнă çамрăк та. Мунчара ĕнтĕ ташлама, сикмех вырăн çук та... çапах мунча улаххинче те хальхи пек ларман ĕлĕк. Купăсĕ, кулли пулнă иçмасса... Халь çук, халь кулмаççĕ...

— Ара, хĕрсем! Çывăрса каятăп вĕт... Каласа парăр-ха, шуйттан çине, мĕн те пулсан... Клавье, эс юрра маçтăр, юрласа яр-ха пĕрре.

Пуçа усса ларнă çĕртен пурте Клавье çине пăхаççĕ. Клавье лавка умĕнчи сак çинче йĕкине çĕрелле антарса пырать: кăлтăр-р-р! туса кайрĕ паçăрах тулнă йĕки. Анчах хăй нимĕн те чĕнмерĕ. Хăйне чĕннĕрен алăк умне çеç пĕрре çаврăнса пăхрĕ. Çавăнтах куçĕсене шурă саппунĕ çине антарчĕ. Пăхмасть никам çине те...

— Юрла ĕнтĕ, Клавье, нумай пулать сан сасса илтменни...

Каллех чĕнмест Клавье. Чĕнес выранне хăйĕн умне аннă вăрăм хура çивĕтне каялла ывăтса ячĕ те тутăрне çамки çине антарарах парса куçĕсене хупларĕ.

Юрлама ыйтаканĕ чарăнчĕ. Чĕнмерĕç ыттисем те. Ăçтан чĕнен? Клавье юлашки кунсенче чистиех хăрса кайнине пурте пĕлеççĕ. Куçĕсем çине те темле хĕрлĕ сăн çапнă. Утти те ĕлĕкхи пек мар — çăмăл мар, темле, пуçне чикерех утма пуçларĕ. Мĕнле те пулсан хуйхă пурах ĕнтĕ Клавьен, пурах. Анчах мĕнлине кам пĕлет? Çын чĕри ăшнех кĕрсе тухма çук-çке-ха, çын чĕри мунча мар-çке-ха. Мунчана эпир кашни çĕрех кĕрсе тухатпăр, чĕре ăшне — çук, кĕрейместпĕр. Çын чĕри ăшне мар-ха, хамăрăнне пĕлместĕн хăш чух. Чĕрере темĕскер пур, ăна пĕлетĕн. Темĕскер вăркăшать унта: вĕриленсе каятăн, карланкă тĕпне темле йывăр япала килсе тăрать, уççăн сывлама чарать... А мĕн вăл? Мĕншĕн çапла? Çук, ăна пĕлейместĕн те вара. Тулашса çӳрен-çӳрен те, вара... лăпланан. Лăпланĕ-ха Клавье те... Хăçан та пулсан каллех юрласа ярĕ, каллех аван пулĕ, каллех кулăпăр, савнăпăр. Ай лайăх-çке ĕнтĕ сасси те. Хăй те лайăх та ĕнтĕ Клавье... сăнран та, чĕререн те лайăх та, пуян çын хĕрĕ, Никантăр Иванч хĕрĕ пулсан та пирĕнпе те калаçать те, çаплах сассине хăйĕнчен те лайăх тес килет... Шыв пек, шыв пек юхать-çке ĕнтĕ сасси, чĕре варнех пырса лекет. Хăш чух тата савăнăçлă юрă юрланă çĕртех сасартăк хурлăхлă юрă юрласа ярать те нимле те чăтаймастăн, пĕр тумлам та пулсан куççулĕ кăларать-кăларатех санне, хăй те тутăрне хальхи пек çамки çине антарать ун чух... Ах, кама кайĕ-ши çав Клавье, кам ырă курĕ-ши ĕнтĕ унпа? Çав Кирле Кĕркурипех тур çырнă-ши е урăххипеши?! Ма, Кĕркури те начарах мар вĕт... Чухăн та ĕнтĕ, çаплах... Тулькка Кĕркури, темме, ытти каччăсем пек мар вăл. Хăй çамрăк, çирĕмре çеç, пысăк çынсемпе, ватă çынсемпе хутăшса çӳрет...

Леш ухмахсем, сухаллисем те итлеççĕ тата хăйне. Вăл хушнине пурне те тăваççĕ. Кам-кам-ха унта, леш комитет бедноты текеннинче?.. Трапхин Ваççи... пулас-ха унта, вăл кăвакара пуçланă сухалках-ха... Вара унта тата леш хайхи, салтакран аманса таврăннă Микка Мирунĕ, тата... Никантăр Иванчă патĕнче работникре пурăннă Упа Иванĕ, тата тепри — мĕнпурĕ Кĕркурипе пиллĕкĕн пулас-ха вĕсем, — тата тепри... ара, камччĕ-ха? А! Ара, матрусра пулнă, «Мериккăра та пулнă эп» текен, Калука Кузьма тата... çавă, çавă. Вот, пурте авланнă çынсем вĕсем. Авланманни çав

Кĕркури çеç унта... Паян та вĕсем пăлхатса çӳренĕ терĕç пулас-ха. Чиркӳ старăстинне ик çĕр пăт, Утар Макçи Игначĕнне ик çĕр пăт шыраса тупса станцăна ăсатнă тет... Клавьесен ашшĕнне, Никантăр Иванчăнне, тупайман, кăнтăрларан пуçласа мĕн хĕвел аничченех шыранă тет те, çапах тупайман тет...

Ах, тĕлĕнмелле Клавьерен те... Кĕркури хăйсем патне пырса туй кусарса çӳрет, çаплах юрататъ вĕт çавна... Кĕркурирен те тĕлĕнмелле: хăйĕн пулас хунĕн ырашне пуçтарса каясшăн... Усал пуль çав Кĕркури, усал пуль... Ытла та нихăçан та кулмасть. Клавье çумне пырса ларсан та сахал калаçать, чĕнмест. Клавйи те çапларах... Çук, ун пекех марччĕ-ха вăл Клавье те... халь, çак кунсенче ытла улшăнса кайрĕ. Те ашшĕсем пĕлнĕ вара вăл Кĕркурипе çӳренине? Ыйтасчĕ, пĕлесчĕ... Çук, ыйтас мар: ун пек чух пырса чăрмантарсан пушшех хурланать çын, пушшех...

Сисет Клавье те хĕрсем ма чĕнмесĕр ларнине. Пĕлет вăл, лайăх пĕлет тантăшĕсем хăй çинчен шухăшланине. Хĕрсем хăйне юратнине те лайăх пĕлет. «Мана хурлантарасшăн мар вĕсем, кулса, ахăлтатса мана хурлантарасран хăраççĕ. Эх, хĕрсем, тен, эсир юрласа ярсан мана та кăшт çăмăл пулĕччĕ. Хурлăхлине юрлăр та куççуль кăларса илсен лăпланăн та-и, тен...» Анчах калама хăяймасть ун çинчен Клавье, çăвар уçнă чухах çухăрса ӳсĕрсе ярасран хăрать. Ытла та тăвăр чĕрене, ытла та.

Çуллан юлашки кунĕсем. Çырма хĕрĕнчи вăйă вырăнĕ умне ватă хурама çулçисем тăкăнаççĕ. Ватă хурама! Çулла савнипе ларнине те аса илтерет вăл. Пахчара юрлама, ĕмĕр тăрăшса юрлама çуралнă шăпчăк юрласа ярать, унпа ташласа юрлас килет. Сан хăвăн кайăк пулас килет, калама çук çӳллĕ йывăç çине ухса пĕтĕм тĕнче илтмелле юрлас килет...

Савни ура çинче, атте ура çинче.
Атте пуртă тытнă, савни — кинжал.
Атте пуртă çĕклет, савнин кинжал çиçет...
Вăт пĕлĕр эсир: кам усал?

Юрласа парасчĕ çак юрра тантăшăмсене...Мĕн калĕçши вĕсем? Хăшне усал тейĕç-ши?! Çук, юрлас мар, чĕре çумĕнчех вырттăр. Пĕччен, пĕччен ăçта та пулсан юрлăп: е ирпе шыв ăсма тухсан, е ак халь, улахран тавăрăнса тӳшек çине выртсан, минтерпе пите хупласа выртсан юрлăп. Пĕччен, пĕччен, никам та илтмелле мар юрлăп!

Вăрман ути çулаççĕ. Илемлĕ вăрман, ахаль те илемлĕ. Ăçтан каласа пĕтерĕн ун илемĕ çинчен? Шурă тĕрленĕ кĕпе-

сем, шурă тутăрсем, кайăк сассисемпе пĕрле хушăнса каякан урапа ҫинче выртса юлнă ача сассисем, ҫаван кĕмĕл сасси, унта-кунта лачака пеккинче чĕриклетсе каякан урапа — ҫаксем пурте татах илемлетеççĕ, татах уçăрах тăваççĕ ахаль те илемлĕ вăрмана... Кăмăл килсе çĕкленнипе вăл çулма пăрахнă, ыттисенчен пăрăнса ката хушшине кĕнĕ. Вăрманти сасса итленĕ. Унтан хăй те чăтаймасăр юрласа янă:

Илĕртет çамрăка ман ик çивĕт,
Илĕртеççĕ шăрçа пек куçсем.
Хама илĕртет уяр пĕлĕт,
Илĕртеççĕ вăрманти сасăсем...

Шĕшкĕ çулçисем сирĕлеççĕ. Вăл тăракан ката хушшинчи пĕчĕк уçланка ют çын, Кĕркури, тухса тăрать...

— Чăнах та, Клавье, çивĕтӳсем те илĕртеççĕ, куçусем те... Анчах вĕсенчен питрех мана сан сассу...

... Çулла, утă вăхăтĕнче пулнă ĕç, темшĕн чĕрене килсе чăмăртанăран çĕре лекнĕ йĕке кăлтăр-р-р! турĕ те, тулнă йĕке аркă (чĕрçи) çине ухас вырăнне мунча урайне йăванса кайрĕ. Хĕрсем ăна сисрĕç пулсан та, чĕнмерĕç. Алăк янаххи çинче сывăрса кайнă каччă пĕр йĕке ĕçлеме пăрахнине сиссе куçĕсене уçрĕ.

— Эх, хĕрсем, пулмасть сирĕнпе ларса. Ни юрламастăр, ни калаçмастăр.. Тепĕр улаха каяс луччĕ... Айтăр, эсир пымастăр-и Анаткаса... Илле, Керки, айтăр?!

— Çук, пымастпăр-ха эпир...

Ик каччă, Иллепе Керки, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç. Алăк янаххи çинчи тухса кайрĕ.

Ма каймаççĕ-ха кусем, Иллепе Керки? Паçăрах килчĕç те ларчĕç, хăйсем нимĕн те чĕнмеççĕ. Ни савни тавраш çук кунта вĕсен, ни ратне тавраш... Чăнах, ку улаха пит килекен марччĕ-çке вĕсем. Килсен те çавăнтах тухса каяканччĕ. Ма паян уйрăмах нумай ларчĕç-ха вĕсем? Кама та пулсан кĕтмеççĕ пуль-çке?!

— Илле, Керки, сирĕн хăвăр енче улах çук-и мĕн?

— Пур-çке... Ма ыйтатăн эс ун çинчен?! Мĕн, сирĕн патăрта ларма та юрамасть-им-мĕн-ха пире!

— Ара, вĕсене Кĕркури çеç кирлĕ вĕт, пĕлместне вара эс ăна, Керки?!

Клавье, Кĕркури ятне асăннăран, темле çӳçенсе илчĕ. Ытти хĕрсем Иллепе Керки калаçма тытăнсан çавăнтах вĕсенчен эрех шăрши çапнине сисрĕç...

Ара, кусем мĕн шырама ĕçнĕ-ши? Аçтан тупнă-ши ĕçкине?! Кам ĕçтернĕ-ши? Халăх тавраш пухăнман-ха ку яхăн-

та. Тата халăх пухăнсан та мĕнле эрех ĕçĕн халь?! Кĕркурисем ним тусан та ĕçтерес çук халăх çинче... Эрехне хăть тупма пулĕ ăна темĕнле саманара та... Чăнах, кам ĕçтернĕши? Тата, иçмасса, ачисем ытла шанчăклисемех мар-ха... Илле хăй амăшне хĕнесе вĕлернĕ теççĕ, Керкийĕ кашни çăварнирех юнлă çĕçĕ тытса ахăрса çӳрет. Кам пĕлет, тен, вĕсем кама та пулсан хупăрласшăн?!

Анчах чĕнмерĕç хĕрсем. Эрех шăршине сиссе сасартăк хăраса ӳкрĕç. Темшĕн Клавье çине пăхаççĕ, темшĕн Клавьепе калаçса илес килет хĕрсен. Темĕскер сисеççĕ хĕрсен чĕрисем. Пĕр-пĕрин çине темĕскер кĕтнĕ пек пăха-пăха илеççĕ. Хĕрсем пăшăрханма тытăннине Клавье те сисрĕ. Иллепе Керки ӳсĕррине паçăрах пĕлет вăл, паçăрах... Ун чĕри тахçанах юнпа килсе тулнă. Паян ирпе, итеме улăм кĕл тăкма тухнă хыççăнах тапраннă ун чĕри, ахаль те çурăлса каяс патне çитнĕ чĕри ун хыççăн пушшех тăвăрланнă.

Атте Иллепе, Керкипе çыхăннă пулсан ыр япала пулас çук ĕнтĕ, пулас çук...

Ахаль çеç калаçмалла пулнă пулсан ма итем хыçĕнче калаçмалла?! Ах, Кĕркури, Кĕркури, мĕн тăватăн эс? Мĕншĕн аттепе çыхланмалла пулнă сан, мĕншĕн? Ытти çынсем, хулари çынсем выçă вилеççĕ пулсан вĕсем патне тырă ăсатса яма ялта урăх çынсем çук-и мĕн? Сансăр пуçнех нумай вĕт, сансăр пуçнех... Ах, Кĕркури, ма çавăн пек-ши эс? Ма пĕр-пĕринпе вăрçмалла-ха, ма вăрçмасăр, çапăçмасăр пурăнма юрамасть?!

Чăтаймарĕ Клавье. Темĕн чул чăтас тесен те чăтаймарĕ. Лавка çумне таянса çухăрсах йĕрсе ячĕ. Хĕрсем пурте кĕнчелисене пăрахса ун патне купаланчĕç.

> Савни ура çинче, атте ура çинче.
> Атте пуртă тытнă, савни — кинжал.
> Атте пуртă çĕклет, савнин кинжал çиçет...
> Калăр, тантăшсем: кам усал?!.

## IV

...Вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс, каç пулса килет. Хăп-хура, хăрăм пек хура пĕлĕтсем йăвана-йăвана çӳреççĕ. Малтан ерипен, кайран калама çук тискер пăрлă çумăр килсе çурĕ. Ахăрать çил. Вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс çĕкленсе кайрĕ. Ярăнчăк пек ярăнать тинĕс, пĕрре çӳле-çӳле-е... ухса каять, тепре калама çук тарăн, тискер шăтăка килсе анать. Пăрлă çумăр, асамăçлă, ахăракан çумăр çаплах çăвать. Çыран курăнмасть, ниçта та пĕр çутă та çук. Тинĕс тата хаярланать, ак халь

çӑтса ярать пĕчĕк луткӑна, халь анса каян тинĕс тĕпне... Ăçта пулӑшу? Кама çухрас? Кам çӑлĕ? Мĕнле çын çак тискер тинĕсе тухса сан патна пырĕ?

Ак, ак пĕчĕк луткӑ ӑшне пĕр пуçĕнчен шыв кĕчĕ. Ак тата тепĕр хум пĕтĕмĕшпех лутка урлӑ каçса кайрĕ. Çур лутка шыв! Вӑй пĕтнĕ, весласем (кĕсменсем) алӑран вĕçернесшĕн. Çухрасчĕ, сас тухмасть. Сасса тинĕс çӑтса янӑ. Ак, ак тепĕр тискер хумĕ йӑванса пырать... Лутка урлӑ каçса кайрĕ. Хӑйпе пĕрле пуçри шлепкене, хӑрах веслана илсе кайрĕ... Мĕн курас?

Тепĕр хумĕ илсе каять вĕт хӑйне те!

— Пулӑшӑ-ӑ-ӑр! Пута-атӑ-ӑп!..

Ак чӑнах та тепĕр хум, хӑй çине хӑй сиксе пыракан тискер хум, луткана çавӑрса пӑрахать...

— Пулӑ-ӑ-ӑ-ӑр!.. та-а-тӑ-ӑп!

Сак çинчен çĕре персе анчĕ... Кĕркури. А, ай! тесе йынӑшса ячĕ те куçне уçрĕ...

Ăçта вӑл? Шыв, тинĕс çук-çке... Пӑрлӑ çӑмӑр та çук. Чӑнах, ӑçта вӑл?.. «А ой! Ой!.. Мĕн ку... ман айӑкра? Мĕн чикет?.. Ăçта эп, ӑçта?»

Хӑйсен пӳрчех мар-и ку? Çавах вĕт ку, çавах... Ак, ак чейник те унтах... Кӑмака та, тенкел те, сĕтел те, крушкӑ та...

— Атте ӑçта вара, атте... Пастай, пастай... мĕн пулнӑ мана... А-ой! Ой!..

Тӑма хӑтланса каллех çĕре персе анать Кĕркури. Куçне хупса нумайччен выртать...

Унтан пӳрте васкаса Кирле пичче кĕрет. Çара пуç. Çӳçпуçĕ тусса пĕтнĕ. Аллинче кӑкшӑмпа сĕт... Ăна хӑвӑртрах сĕтел çине лартать те ывӑлĕ çумне пĕшкĕнет. Сиксе чĕтрекен алӑсемпе пуçне çĕклет. Кĕркури каллех йынӑшса, йывӑррӑн куçне уçать...

— Атте... Атте... Мĕн пулнӑ мана, мĕн пулнӑ?

Ашшĕ чĕнмест. Чĕнес вырӑнне пĕрĕннĕ куçĕсене хӑвӑрт-хӑвӑрт хупса уçрĕ те, ывӑлне çĕклеме хӑтланать...

— Ой!.. атте... ан тив... хамах тӑратӑп, хамах...

Тепĕрер минутран асаплана-асаплана вырӑн çинех выртать. Ашшĕ чĕтресе, калаçма та пултарайманскер, ывӑлĕ умне крушкӑпа сĕт илсе пырать...

— Пастай... пастай... Мĕн пулнӑ мана, мĕн пулнӑ? Тинĕс, шыв, лутка... пӑрлӑ çӑмӑр... тĕлĕк пуль-çке вӑл...

Аяка темĕскер вӑрӑммӑн килсе чикнĕрен куçа хупса темĕскер аса илесшĕн тӑрӑшать Кĕркури...

...Илемлĕ çĕр. Çĕнĕ юр. Карта хĕрринчи улӑм кĕл тĕмĕсем. Уйӑх. Çӑлтӑрсем. Çырмари шӑнкӑртатса юхакан çӑл. Çырма

урлă каçнă. Тепĕр çырмана пынă. Улах. Хĕрсем. Клавье. Илле, Керки...

— Ой! О-ой!..

Каллех ăнсăр пулса каять Кĕркури. Кирле пичче крушкине сĕтел çине лартса пĕртен-пĕр хуралнă икон çине пăхса хĕрес хывма тытăнать. Чĕнмесĕр. Чĕнмесĕр, хăш-пĕр чух сассăр пăшăлтатса кĕл тăвать. Чӳрече умне сивĕ, шартлама сивĕ кун пырса тăнă. Чӳрече умĕнчи йăмра шартлатса çурăлни пӳртех илтĕнет. Çавăн пекех чӳречерен вĕçерĕннĕ хуплашки те вăхăчĕвăхăчĕпе шăт-шат! тутарать. Сивĕ çил урамра...

— Атте, атте...

Кирле пичче кĕл тума пăрахса крушкăпа сĕте каллех илет те чĕннĕ çĕре пырать.

Вăл ним тума аптăранă. Вăл капкăна лекнĕ кайăк пек. Такам кăкрине килсе хĕстернĕ унăнне. Хĕстернĕ те: ни вĕлермест, ни ямасть.

Каç çăкăрпа тăвар çисен, чей ĕçсен, çывăрма тесе кăмака çине ухнă вăл. Çывăраймасăр нумайччен йăваланса выртнă. Шăп пулнă. Çанталăк та шăп, илемлĕ пулнă каç... Нимле сас та çукчĕ урамра. Ăна вăл çывăрса каяймасăр темиçе хутчен те тула тухса кĕнĕрен лайăх астăвать. Пӳртре те çавах, шăп пулнă. Вăл хăй пуçа тĕрлĕ шухăшсем çĕмĕрнĕрен ахлатнă та, тата кăмака хыçĕнче хура таракансем пăшăлтаткаласа çӳренĕ...

Алтансем те авăтса янă. Вăл çаплах çывăрайман. Сиснех пуль çав чĕре темскер пуласса...

Шавла-шавла хапхана чĕриклеттереççĕ. Темиçе ураваскаса алкумне ухать. Пӳрте уçаççĕ... Камсем? Мĕн пулнă унта? Кама сĕтĕрсе кĕреççĕ?..

Кăмака çинчен аннă та, унта: хĕрсем, ачасем, такăшĕ — пĕр хĕрĕ çухăрсах йĕрет...

— Эх-ха-ха-а-ах! Самана-а-а...

Мĕн чул каламан-ши Кĕркурине: ан çыхлан вĕсемпе, Никантăр Иванчсемпе тесе... Вĕсене этем ывăл-хĕрĕ çĕнтерĕ-и?! Çук, çĕнтерес çук вĕсене... Ав мĕн туса пăрахрĕç ĕнтĕ?! Вилет вĕт Кĕркури, вилет... Эх, пĕтерет-çке пурăнма пĕлменни те.

— Тем курăн-ха та ватăлмалăх кунта, тем курă-ăн...

Чикнĕ те пăрахнă... Мĕн тăвас тен ĕнтĕ эс вĕсемпе?!

Сисет çав чун, сисет. Ахальрен мар ăш вăркаса çӳрерĕмĕн... Чистиех вилсе каймасан юрĕччĕ иçмасса... Ой, аташрĕ-çке ĕнтĕ каç, асапланчĕ... Ах, мĕн тĕрлĕ йĕчĕ-ши тата хĕрĕ, Никантăр Иванч хĕрĕ...

Ытти хĕрсем тухса кайрĕç. Вăл, çав тери пуян çын хĕрĕ, кунта, ун пӳртĕнче, ун ывăлĕ çумĕнче ларса юлчĕ. Çĕрĕпех

ларчĕ. Çĕрĕпех йĕчĕ... Йăпатас тесе темиçе хутчен те çăвар уçнă та... Çук, йăпанмасть. Çав тери пуян çын хĕрĕ мĕн курнă-ши ĕнтĕ ман ывăлра? Мĕншĕн çавăн пекех çĕр çывармасăр йĕрсе лармалла пулнă-ши?!

Паян ир киле çитсен: ăçта пулнă эс тесен, мĕн каларĕ-ши ĕнтĕ ашшĕне, мĕскĕн?!

— Атте, атте... Ма чĕнместĕн çак эс?..

Каç пулса иртнĕ ĕç, Клавье куççулĕ чистиех пăвса илет Кирле пиччене: аллисем сиксе чĕтреççĕ, крушкăри сĕт çĕре тумланать, куçĕсем хăвăрт-хăвăрт хупăнаççĕ крушкă çине, тăкăннă сĕт тумламĕсем вырăнне куççулĕ тумланать.

— Атте, атте... Ма чĕнместĕн? Ма йĕретĕн?

Тăма хăтланать Кĕркури, анчах тăраймасть. Ашшĕне хăй çумне ларма кăчăк туртать, ашшĕ курмасть. Йывăрланса çитет вара, куçне хупать Кĕркури: ерипен лăпланса çывăрса каfive...

## V

Вăхăт нумай иртнĕ. Хыçа пĕр эрне юлнă: çиллĕ, тăманлă, сивĕ кунсем... Анчах эрне иртсен тата сивĕрех кунсем пуçланса кайрĕç. Самани те тискер, çанталăкĕ те тискер. Урам тăрăх пынă чухне сухал хăй çине тĕрлĕ шăрçасем çакать, урари çăпата чул пек хытса каять.

Пасар вырăнĕ. Никантăр Иванч умĕнче тулли халăх. Пĕрре калаçса хурт пек ĕрлесе ăраççĕ, тепре лăпланаççĕ: хытнă çăпатасемпе сăран алсисене пĕр-пĕрин çумне çапса сиккелесе тăраççĕ. Сивĕ. Питĕ сивĕ. Сухал çинчи пăрлă шăрçасем янаха чĕпĕтеççĕ. Хăлхасене тăм илет.

Çирĕм лав ыраш. Çирĕм çуна. Пĕр вĕçĕ, аякри, пĕччен ларакан пасар кукри патнех çитнĕ, тепĕр хыçри вĕçĕ — Никантăр Иванч хапхи умĕнче.

Чĕри-и-ик, чĕри-и-ик!.. тăваççĕ çуна тупанĕсем. Темĕскер ыратнă пекех йынăшаççĕ. Шăннă, çунана кӳлĕннĕ лашасем чĕтреççĕ. Урисене ылмаштара-ылмаштара тăраççĕ. Хăвăртрах тапранса каясшăн вĕсем. Чупса ăшăнасшăн.

— Ма тухмаççĕ çавăнта?.. Шăнатпăр вĕт, хăвăртрах тапранасчĕ.

— Ара, ĕлкĕрĕн-ха. Хăйне, Никантăр Иванча, илсе тухчăр-ха...

— Ăна хăйне те илсе каяççĕ-и мĕн?..

— Ма тĕлĕнсе ыйтан?! Хĕрхенетне мĕн?! Пĕçернĕ тĕк хăех çитĕр пăттине те!..

— Ырашне ăçтан тупнă-ши тата? Пĕркун тупайман терĕç-çке...

— Вăл шуйттансем таҫтан та тупĕҫ...

— Ма шуйттансем?! Эс ху шуйттан мар-и? Сан хăвăн Никантăр Иванчпа станца каяс килмест-и, асту!..

— Унта эсех кай, карма ҫăвар, ҫынăнне хапсăнакан!.. Хăҫан кӳрсе паран-ха эс ман ҫунана?

— Чарнăр ĕнтĕ, чарнăр! Ҫуна пирки киле ҫитсен ҫапăҫăр!..

Икĕ кӳршĕ пĕр-пĕрин ҫине ҫилленсе пăхса калаҫма чарăнаҫҫĕ. Куҫĕсем иккĕшĕн те: пастай-ха, эпĕ сана кăтартăп! теҫҫĕ...

— Чăнах, чăнах... ăҫтан, мĕнле тупнă-ши тыррине?

— Ҫурри ытлăхра, ҫурри вите айĕнче пулнă тет... Хĕрĕ, Клавье, каласа панă...

— Хăйĕн хĕрех, Клавьех, тет-и?

— Ҫавах...

— Ах, пӳтсĕр хĕр! Вăт эс на! Ашшĕне хирĕҫ кайнă. Тем курăн, тем курăн ҫав...

— Хĕрĕ пӳтсĕр-и, пӳтсĕр мар-и, ашшĕнчен лайăхрах ĕнтĕ...

— Тем курăн, тем курăн, такăш лайăх, такăш чипер, пĕлместĕп.

Шур старик алса ăшĕнчен аллине кăларса чиркӳ еннелле хĕрес хывса илет.

— Ярмак! Ярмак!.. Чар лашуна, ман ута ҫиет лашу, чар!

— Утине ҫисен те, супниййĕ (ҫатанĕ) юлĕ-ха... Мĕн ҫухратăн, пушар чанĕ!..

— Сивĕ-ҫке-ха, сивĕ... Вут хурса ларăттăмччĕ алла ăшăтма...

Никантăр хапхи уҫăлса кайрĕ. Шавласа тăракан халăх шăпланчĕ. Хапхаран комитет бедноты ҫынĕсем тухрĕҫ. Унтах Никантăр Иванчă, Илле, Керки...

Вĕсене кайри ҫуна ҫине лартрĕҫ те, ҫирĕм лав пăхса хытса кайнă халăх хушшинчен тапранса кайрĕ. Лашасем хăйсене тапратса янăшăн савăнсах чупаҫҫĕ. Хапха умне упăшки хыҫҫăн уласа тухнă Урине йăванса каять... Унтах Клавье. Амăшне ҫĕклесе тăратасшăн. Хăйĕн те куҫĕсем шыҫса кайнă.

Хапха уҫă. Кил картинчен урамалла сиксе йытă вĕрет. Вăл урамра тăракан халăха ҫыртса ҫурса тăкасшăнах вĕрет: пĕрре йăви патне, тепре кунталла сиксе илет. Вĕҫернесшĕн сăнчăртан. Анчах сăнчăрĕ ҫирĕп, мăйĕ ҫинчи чĕнĕ те, сарлака. Вĕрсен-вĕрсен сасси тытăнать йыттăн, йынăшса ярать: чистиех вăйсăрланса ҫитсе хырăмĕпе юра сăтăрса йынăшать, улать...

Ак амăшне йăпатма пултараймасăр Клавье те ҫухăрса юр ҫине ӳкрĕ. Ик сас пĕрле хутшăнса кайрĕҫ.

— Никантăр... Никантă-ă-ăр! — терĕ амăшĕ. Çавăнтах пичĕпе сивĕ юр çине килсе çапать. Çӳçĕ-пуçĕ саланса кайнă. Пичĕ çинче тискерĕн-тискерĕн ниçта та тапранма пултарайман куçĕсем, тата ик-виç пĕрчĕ куççулĕ хытса кайнă.

Никантăр çук. Илле те, Керки те çук. Вĕсене станца илсе кайнă. Вĕсем тек килес çук...

— Кĕркури... Кĕркури!.. — тесе юр çине пăхса шăппăн чĕнет Клавье.

Кĕркури çук. Кĕркури çав кунах вилнĕ Иллепе Керки çĕççинчен, ашшĕн, Никантăр, çĕççинчен...

Нумайччен хытса кайса тăчĕ халăх. Çирĕм лав тахçанах курăнми пулнă. Йытă та сасне çухатрĕ.

Мĕн тăвас? Амăшпе хĕрне пӳрте илсе кĕмелле вĕт... Çук, пĕри те тапранмаççĕ.

Çав вăхăтра таçтан Кирле пичче сиксе тухрĕ. Çарран. Çара пуç. Йӳле пилĕк. Аллинче пысăк пуртă. Хапха умĕнче унталла-кунталла пăхкаласа тăчĕ те кил карти витĕр пӳрте чупса кĕрсе кайрĕ. Унтан каллех чупса тухрĕ. Каллех хапха умне пычĕ. Пĕрре халăх çине, тепре хапха умĕнче выртакан амăшĕпе хĕрĕ çине, тата тепре хăй çине пăхать.

— Ăçта?! Ăçта, Никантăр ăçта?! — пуртине çӳлелле çĕклесе çухăрса ярать. Юлашкинчен икĕ хутчен... пуртăпа çĕре килсе çапрĕ.

— Ах-х! — тесе ярать халăх харăс.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

— Кирле пичче ухмаха ернĕ. Никантăр арăмĕпе хĕрне пуртăпа каснă... Айтăр шăтăк чавма!..

Хов! Хов! тискеррĕн вĕрет уçă хапхаран йытă. Масар çине шăтăк чавма каякансем иртсе кайрĕç... Хапха уçă. Хапхана никам та хупмасть... Хапхана вун саккăрмĕш çул уçса хăварчĕ.